чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

30 /26436/№ Ытлари кун, 2014, нарăс (февраль), 18 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

# Чăваш Ен малти вырăнта

***Нарăсăн 17-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕç тăвакан влаç органĕсен тата федерацин территори управленийĕсен, хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕ Владимир Аврелькин пĕлтернĕ тăрăх – нарăсăн 7-мĕшĕнче Сочире Раççей регионĕсен куравĕ ĕçлеме пуçланă. Унта Чăваш Республики те хутшăнать. Чăваш Ен экспозицийĕ республика тăрăх "çул çӳревре пулма", чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе, культура пуянлăхĕпе, экономика отраслĕсен аталанăвĕпе, спорт çитĕнĕвĕсемпе, регионăн инвестици тата туризм ресурсĕсемпе паллашма май парать. Унăн авторĕсем шухăшланă тăрăх – курав ĕçленĕ хыççăн Чăваш Ене килекен туристсен йышĕ палăрмаллах ӳсĕ.

Владимир Аврелькин çавăн пекех промышленноç комплексĕн 2014 çулхи кăрлач уйăхĕнчи ĕç кăтартăвĕпе паллаштарнă. Çак тапхăрта промышленноç производствин индексĕ экономика ĕçĕ-хĕлĕн виçĕ енĕпе /усăллă япаласем кăларни, тирпейлекен производствăсем, электроэнерги, газпа шыв туса кăларни, валеçни/ республикăра 110,1% пулнă. Ку кăтартупа Чăваш Ен федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче пĕрремĕш вырăнта.

Çапах та çăмăл тата апат-çимĕç отраслĕсенче ӳсĕм пулайман. Михаил Игнатьев апат-çимĕç, ĕçме туса кăларас енĕпе лару-тăрăва тишкерме хушнă. "Пурте туянакан паха продукци кăлармалла, малашне аталанмалли уçăмлă план туса хатĕрлемелле", – тенĕ республика Пуçлăхĕ.

ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Светлана Енилина 2013 çулта патшалăх тата муниципалитет пурлăхне приватизацилени, 2014 çулхи тĕллевсем çинчен пĕлтернĕ. 2013 çулта Чăваш Республикин патшалăх пурлăхне приватизациленипе республика бюджетне 559,2 млн тенкĕ /2012 çулхи кăтартусенчен 3,4 хут пысăкрах/ кĕнĕ.

2013 çулта муниципалитет пурлăхĕн 357 объектне приватизациленĕ. Муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен администрацийĕсем 2013 çулта 201 объекта приватизациленĕ /2013 çулта Приватизацилемелли программăна кĕртнинчен 56%/.

"Муниципалитетсен бюджечĕсене приватизаци мероприятийĕсем ирттерме укçа пăхса хăварман тăк мĕншĕн-ха вĕсем çак мероприятисене приватизацин çулталăкри планне кĕртеççĕ?" – тенĕ Михаил Игнатьев, республикăн Финанс министерствине çулталăк пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх счетсем çинче бюджетăн усă курман укçи-тенки юлнă муниципалитетсен ĕçне тĕрĕслеме хушнă.

Ял хуçалăх министрĕн çумĕ Эдуард Александров 2014 çулта уй-хирти çурхи ĕçсене мĕнле хатĕрленни çинчен пĕлтернĕ. Хальхи вăхăтра ял хуçалăх культурисен вăрлăхне, минерал удобренийĕсем туянаççĕ, техникăна çур акине хатĕрлеççĕ.

■ **Т.СИДОРОВ**

***Хисеплĕ вулакансем!***
***"Хыпар"Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ.***
***«Хыпар» – 460-86 тенкĕ.***

*02 служба*

# Полицире – «Студентсен десанчĕ»



***– Паллах, çак çамрăксенчен хăшĕсен пирĕн патра пулса курнă хыççăн ШĔМ тытăмĕнче ĕçлес кăмăл çуралчĕ тĕк – лайăх, çапах та ку акци тĕллевĕ профориентаципе çыхăнман, эпир «Студентсен десантне» йĕркеленĕ май чи малтанах полицие обществăшăн уçăрах тăвассине, çамрăксем пирĕн ĕçе шалтан курнă май тивĕçлипе хаклассине тĕпе хутăмăр, – пĕтĕмлетрĕ калаçу пуçламăшĕнче ЧР Шалти ĕçсен министерстви йĕркеленĕ акци тĕллевне министр çумĕ Олег Яковлев.***

Тĕрĕссипе, кунашкал акци пирвайхи мар. ШĔМ маларах «Студент професси суйлать» акци йĕркелесе яшсемпе хĕрсене полици ĕçĕпе паллаштарнă. Хальхинче вара – «Студентсен десанчĕ». Пилĕк кун хушшинче тĕп хулари аслă шкулсен чылай студенчĕ Шалти ĕçсен министерствин подразделенийĕсенче пулса курнă. Тепĕр тесен курнă кăна та мар – пакунлă çынсемпе пĕрле тĕрлĕ пăтăрмахе преступлени пулнă вырăнсене те çӳренĕ.

Участковăйпа пĕрле йĕркесĕр çемьесенче пулни çамрăксене уйрăмах тĕлĕнтернĕ. Хĕрсем унашкаллине уйрăмах çывăха илеççĕ те – курни-илтнине пушшех пăшăрханса палăртаççĕ: «Эпир халĕччен кунашкаллине курман... Шок!» ШĔМ пресс-службин представителĕсем пĕрле пулнă май çав рейдран сюжет та хатĕрленĕ те – хаçатăн ăна-кăна курнă корреспонденчĕшĕн те çав сăнсене пăхасси ансат пулмарĕ. Кухньăра ним йĕрки çук: таса мар, пушă кĕленчесем, плита çине апат тăкăннă май хыта-хыта ларнă... Ачине пĕччен çитĕнтерекен хĕрарăм ĕçкĕпе иртĕхет иккен. Чăн та, участковăйпа калаçнă май хăй нумаях пулмасть ĕçе вырнаçни пирки пĕлтерет. Те тĕрĕсех, те суять...

– Полицейскин шăпах çакнашкал вырăнсенче нумай пулма тивет, – сăмахне тăсрĕ О.Яковлев. – Тĕрĕссипе, патшалăхăн суранĕ ăçта – çавăнта полици. Пакунлă çыннăн çакнашкал хура ĕç нумай. Паллах, çакна кура йĕркелĕх хуралçин чунĕ хытать-тĕр – пĕртте çăмăл мар. Апла пулин те полици представителĕн çынпа тимлĕ пулмалла, яваплăха туймалла.

ШĔМĕн Общество канашĕн членĕ Иван Бойко та полицейскисемпе пĕрре кăна мар рейдсене тухнă та – çирĕплетсех калать: «Полицие хурласси йăлана кĕнĕ. Чăннипе, йĕркелĕх хуралçисем яланах куç умĕнче те – çавăнпа ытлашшипех лекет. Çакнашкал шухăш-кăмăла улăштарма йывăр. Хам тăрăхах хаклатăп: эпĕ те унччен полицин шалти ĕçне курма тăрăшман. Йĕркелĕх хуралçисен чылай чухне кану кунĕсем çукки, çавна пулах çемйисенче çивĕчлĕх пулма пултарни, çавнашкал ытти самант пирки шухăшламан та. Общество канашĕнче пулнă май пакунлă çынсемпе çывăхрах паллашнине кура шухăшăм улшăнчĕ. Хирĕçлеместĕп, ШĔМре çитменлĕх нумай-тăр, анчах çакна шута илмелле: пурнăç хĕстерсе çитерсен никамран та мар, чи малтан полицирен пулăшу ыйтатпăр».

Студентсем полицин нарядсен ĕçне йĕркелесе пыракан центрĕ пирки тĕлĕнсе-хавхаланса каласа пачĕç. «Шупашкарта кăна 160 ытла камера иккен – «Хăрушлăхсăр хула» программа ĕçлет. Унтан пĕтĕмпех кураççĕ! Çынсен шăнкăравĕсене йышăнакансем вара пĕтĕмпе те виççĕн çеç. Эпĕ пĕр 50 çынран кая мар пуль тесе шухăшланă. Вĕçĕмсĕр шăнкăравлаççĕ-çке – пурне те итлемелле, шута илмелле, инкек е преступлени тунă тăк унта нарядсене ямалла. Пур пĕр ĕлкĕреççĕ!» – тĕлĕннине пытармасть педуниверситет студентки Анна Егорова.

Тепĕр подразделени – экспертизăпа криминалистика центрĕ. Унта çамрăксене суя банкнотсем кăтартнă – «чăннинчен уйăраймăн та!» Кунта ĕçлекенсен майĕсем анлă – тивĕçлĕ оборудованипе пуян. Ахальтен мар ĕнтĕ Мария Платонова студентка, авă, преступлени пулнă вырăна çӳрекен криминалист чăматанне килĕштернĕ: «Манаççĕ çавăн пекки – унта тем те пур!» Павел Яковлев криминалист ĕçĕпе паллашнă. Вăл пуç купташки тăрăх çын сăн-сăпатне палăртать – унашкал специалистсем Раççейре те сайра-мĕн.

Кинологи службинче вара йытăсем тĕлĕнтернĕ. «Эпир унта овчаркăсем кăна пуль тесе шухăшланă. Апла мар иккен, ытти ăрат та пур – кокер-спаниель таранах. Взрыв хатĕрĕсене шыраççĕ, наркотике ăçта пытарнине самантрах тупма пултараççĕ», – хӳреллĕ туссен пултарулăхне пысăка хурса хакларĕç каччăсемпе хĕрсем.

Экран çинче вара – студентсен çул çӳревĕн тепĕр сюжечĕ. Ӳсĕр çын ним сăлтавсăрах троллейбусăн водитель енчи кантăкне çапса ватнă. Тарасшăн – полицейски ăна вĕçертмест. Ӳсĕрскер усал сăмахсемпе ятлаçать – вĕсене «цензура» пиклетекен сасăпа хупланине кура йĕркене пăснăскерĕн калаçăвне кашни сăмах хыççăн тенĕ пек «пик!» сигнал пӳлет.

ЧПУ студенчĕсем Константин Хлебниковпа Дмитрий Елуков вара ДПС, ППС сотрудникĕсемпе кунĕпех пĕрле çӳренĕ. «Хулан пĕр урамĕнче машина хĕрарăма çапса хăварни çинчен хыпар çитрĕ. Айăпли автомобильне пăрахсах тарнă. Пĕр тăхтамасăр унта çитрĕмĕр. Пакунлă çынсем тӳрех шырав пуçарчĕç, сехет те иртмерĕ – руль умĕнче пулнă çынна тупса тытса чарчĕç», – каласа парать пĕри. Теприне вара ПАИ инспекторĕсемпе пĕрле пулнă май водительсем мар, çуран çӳрекенсем хăлăхсăрри тĕлĕнтернĕ: «Çулланнă хĕрарăм çул урлă юраман вырăнтан каçать. Инспекторсем ăна асăрхаттарчĕç те – ятлаçма та именмест: «Троллейбус çакăнта чарăнать тĕк çул урлă каçмашкăн манăн мĕншĕн лерелле утса чăрманмалла?» – тет. «Зебра» вара инçе те мар – пур пĕр утас килмест».

Çапла çав, халăх йĕркелĕх хуралçисенчен хăрама пăрахрĕ. Тепĕр тесен хăрани кирлĕ те мар-тăр, анчах хисеп – пулмаллах. Полицейски хăйĕн ĕçне обществăшăн, çыншăн тăвать-çке. Шел, нумайăшĕ çакăн пирки манать. Çавăнпах вĕсене, влаç представителĕсене, тапăннă-кӳрентернĕ тĕслĕх те нумайлансах пырать. О.Яковлев пĕлтернĕ тăрăх – Уголовлă кодексăн 317, 318, 319 статйисемпе пĕлтĕр кăна 350 яхăн уголовлă ĕç пуçарнă. Пакунлă çынсене çапаççĕ, çыртаççĕ, чикеççĕ, усал сăмахсем каласа кӳрентереççĕ – ним те мар! Куншăн явап тытма тивет. «Студентсен десанчĕ» йышши акцисем шăпах полицие, унăн ĕçне хисеплемешкĕн пулăшма тивĕç. Ку, чăннипе, пакунлисене кăна мар, чи малтанах пире, йĕркелĕх хуралçисенчен хӳтлĕх кĕтекенскерсене, кирлĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

КУН хыççăн КУН ☎ 56-04-26

## Вĕсен паттăрлăхĕ манăçмĕ

***Нарăсăн 15-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шывра Афганистанран Совет Çарĕн контингентне илсе тухнăранпа 25 çул çитнине халалласа тĕрлĕ мероприяти йĕркелерĕç.***

Юбилее халалланă уяв Чул хулара та иртнĕ. Унта пирĕн республикăри 89 «афганец», ветерансен юхăмĕн, çар-патриот воспитанийĕн организацийĕн ертӳçисем хутшăннă. Вĕсене Раççей Федерацийĕн Президенчĕн федераци Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич ячĕпе унăн çумĕ Алексей Сухов ăшшăн саламланă.

РФ Патшалăх Думин депутачĕ, федерацин Атăлçи округĕнчи Афганистан вăрçин ветеранĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Франц Клинцевич 25 çул каяллахи вăрçă ветеранĕсемшĕн, вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн, пулăшу кӳме тăрăшнăшăн РФ Президенчĕн полномочиллĕ представительне Михаил Бабича чĕререн тав тунă.

**А.СТЕПНОВ.**

## Диплома тивĕçнĕ

***Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Пирĕн пурнăç» хаçат корреспонденчĕ Альбина Замуткина сусăр çынсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне çутатнăшăн РФ Журналистсен союзĕн Дипломне тивĕçнĕ.***

Сусăр çынсен кун-çулĕпе кăсăклантарас тĕллевпе РФ инвалидсен обществи тата Раççей Журналистсен союзĕ 2012-2013 çулсенче «Йывăрлăхсене çĕнтерсе» конкурс йĕркеленĕ. Телекуравпа радио, пичет кăларăмĕсенче кун çути курнă чи лайăх статьясемпе очерксемшĕн, интервьюсемпе репортажсемшĕн тата ытти материалшăн ятарлă премипе чысласçĕ. Çĕнтерӳçĕсене Мускавра Журналистсен тĕп çуртĕнче иртекен пресса балĕнче саламлаççĕ.

**А.ПЕТРОВ.**

## Çĕнĕ каток

***Канаш хулинче çамрăксемпе ачасен канăвне лайăхлатас тата вĕсене сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарас тĕлĕшпе ĕçлекен ятарлă проектсемпе программăсем аван пурнăçланаççĕ.***

Хастар та пултаруллă çынсем нумаях пулмасть шăпăрлансене çĕнĕ катокпа савăнтарнă. Спорт лапамĕнче çулла та аван: унта футболла, волейболла тата баскетболла выляма услови çителĕклех. Канаш ачисене сивĕ кунсем те шиклентермеççĕ. Пĕрисем йĕлтĕр сырса çырманалла васкаççĕ, теприсем коньки тăхăнса пăр çине тухаççĕ. Çакнашкал каток хулара пĕрре мар – кашни микрорайонтах пур.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## Çĕр-шыв рекорчĕсене çĕнетнĕ

***Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕнче çăмăл атлетика енĕпе çĕр-шыв чемпионачĕ иртнĕ.***

39 регионтан килнĕ 209 спортсмен тĕрлĕ ăмăртура мала тухассишĕн тупăшнă. Чемпионатра атлетсем Раççейĕн 58 рекордне çĕнетнĕ. Пирĕн ентешсенчен унта Çĕнĕ Шупашкарти 2-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптакан Константин Репин уйрăмах палăрнă. Вăл 60, 200 тата 400 метрлă дистанцисенче пĕрремĕш чупса тухса ылтăн медальсем çĕнсе илнĕ. РФ тава тивĕçлĕ тренерăн Валерий Васильевăн вĕренекенĕ, Раççей спорт мастерĕ Борис Масленников (Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 1-мĕш спорт шкулĕ) 400 метрлă дистанцие виççĕмĕш вĕçленĕ. Çӳллĕшне сикес енĕпе Евгений Волков «бронзăпа» пуянланнă. Пултаруллă тренерăн тепĕр воспитаннинĕ Иван Скрынник йĕтре тĕртекенсен ушкăнĕнче пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине хăпарнă.

**О.МАСЛОВ.**

*Сочи – 2014*

# Раççей команди – пиллĕкмĕш

***XXII Олимпиада пуçланнăранпа вунă кун иртрĕ. Нидерланд, Германи, Норвеги командисем пуринчен вăйлăрах.***

Раççей спортсменĕсем те вĕсенчен юласшăн мар. Акă пирĕннисем, Олимп вăййисенче нихăçан та ку енĕпе палăрманскерсем, скелетон турнирĕнче мала тухса тĕлĕнтерчĕç. Пĕрремĕш наградăна – «бронзăна» – Елена Никитина çĕнсе илчĕ. Тепĕр кунах 29-ти Александр Третьяков арçынсен тупăшăвĕнче çĕнтерсе эпир те ыттисенчен кая маррине çирĕплетрĕ.

Шăмат кун конькипе чупакансем пухмача икĕ медальпе пуянлатрĕç. Тӳрех икĕ спортсмен шорт-трек енĕпе ăмăртса /1000 метрлă дистанцире/ пьедесталăн пирвайхи картлашкисем çине хăпарчĕç. Акă вĕсем Олимп паттăрĕсем: Виктор Ан /1500 метрлă чупура вăл «бронза» çĕнсе илнĕ/ тата Владимир Григорьев.

Вырсарни кун пирĕн арçын йĕлтĕрçĕсем эстафетăра иккĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Дмитрий Япаров, Александр Бессмертный, Александр Легков, Максим Вылегжанин призерсен йышне кĕрессишĕн тăрăшрĕç. Юлашки хут арçынсем эстафетăра 1988 çулта палăрнă.

Икĕ «ылтăнпа» пуянланнă хыççăн Раççей команди 5-мĕш вырăнта, медальсен йышĕпе вара эпир иккĕмĕш. Ăмăртусем малалла пыраççĕ. Акă керлингçăсемпе хоккейçăсем пур йывăрлăха пăхмасăр финала тухассишĕн ăмăртаççĕ. Биатлонçăсемпе фигуристсене шанатпăр, бобслейçăсенчен те наградăсем кĕтетпĕр.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ



# ЛАВККА СЕНТРИСЕМ ТУП-ТУЛЛИ...

**Паян, суту-илӳ ĕмĕрĕнче, пĕтĕм япалана туянма май пур – укçа-тенкĕ пултăр кăна. Кĕсйӳ хулăн тăк çурт та çĕкленет, хваттер те юсанать, пахча та сухаланать... Ерçӳ çук – апат-çимĕçе те килех илсе пыраççĕ, вутшанкă та вакласа пама хатĕр. Лавккара кăмăла килнĕ чылай япала та санăн аллунтах пулĕ.**

**Чăн та, супермаркетсенче мĕн кăна çук пулĕ – хутаçна тултар та тултар. Хулара пурăнаканшăн лавкка вара вăл – çăлăнăç. Мĕн кирлĕ – тӳрех унта чупатпăр. Анчах хальхи вăхăтра пĕр-пĕр кун лавкка уçăлмасан ял çынни те кăлăк чăххи пек калле-малле чупкалама тытăнать.**

**Командировкăна кайсан пĕр ялта тин уçăлнă лавккана кĕрсе тухрăм. Çĕнни çĕнех çав: таса та тирпейлĕ, тавартан пуян... Унта нимĕн те туянмарăм пулин те ялта мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех пĕлекен сутуçăпа чылай калаçса тăтăм, унран ял халăхĕ мĕнпе кăсăкланнине тата вĕсене мĕнле ыйту канăçсăрлантарнине тĕпчерĕм. Çамрăксем ĕçке ернĕ, ялта ĕç çук, хуçалăх саланнă – çапларах пулчĕ хурав. Чăннипех çивĕч ыйтусем паянхи ялшăн. Çапах та мана урăххи кăсăклантарчĕ.**

**Хĕрарăмпа калаçса тăнă вăхăтра лавккана килекен çынсене сăнарăм: вĕсем мĕн туянаççĕ, мĕнле тавар ытларах сутăнать-ха. Яланхи пекех çăкăр-кулач, пылак çимĕç, хуçалăхра кирлĕ япала илме васкать ял çынни. Сутуçă каланă тăрăх – хăватлине те тиркемеççĕ /ют çын умĕнче вăтанчĕç курăнать/, сĕтçăмарта та аван сутăнать иккен. Паллах, кивçенле туянма килекен те пур лавккана. Акă пĕр 40-50 çулсенчи хĕрарăм кĕчĕ те тархаслама тытăнчĕ. «Кивçенле пар-ха, упăшка таврăнсан килсе тӳлетĕп, атту ним çимелли çук», – терĕ те пĕр сумка апат-çимĕç тултарса тухса кайрĕ. «Кашнинче çапла ыйтса уйăхне вуншар пин пухăнать. Каярах тӳлеççĕ паллах, çавăнпа хĕрхенетĕп», – пĕлтерчĕ сутуçă. «Выльăх-чĕрлĕх усрамаççĕ-им?» – кăсăклантăм хайхи. «Темиçе çул каялла пурччĕ-ха, усрамашкăн сарай-вити аванах пулин те амăшĕ вилсен сутса пĕтерчĕç. Хĕрарăмĕ кахалрах çав», – терĕ сăмахташăм.**

**Çак пулăм хыççăн шухăша путрăм: ялта пурăнса та выçса вилме пулать иккен. Паллах, ним тĕлĕнмелли те çук тейĕ хăшĕ-пĕри. Анчах та ял çынни юр-варне, аш-какайне тата ытти çимĕçе лавккара туянасси йăлана кĕчĕ. Çапах килте чăх-чĕп усрасан çăмарти те, ашĕ те сивĕтмĕш тулли. Ĕне-пăру пур тăк – сĕт, хăйма тата ытти яланах сĕтел çинче.**

**Выльăх усрани тупăшлă мар тесе сăлтавлать ял çынни. Колхоз-совхоз кĕрлесе тăнă чухне, паллах, кашни киле утă-улăм, тыр-пулли килсех тăнă. Пай çĕрĕ çинче лартса ӳстермесен паянхи йывăр лару-тăрура вĕсене туянма тивет ахăртнех, анчах камăн пилĕк авас килтĕр. Пысăк укçа ĕçлесе илме хăнăхнă çамрăксен пайтасăр ĕçпе аппаланма пачах кăмăл çук. Вĕсем аслă ăру çыннисенчен тĕслĕх илесшĕн мар çав.**

**Шухăша малалла тăсса кӳршĕ ялти кинемейпе паллаштарас килет. 9 теçетке урлă каçнă Маруç аппа пĕччене пурăнать, ачи-пăчи пурте çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче йăва çавăрнă. Пур пĕр аптрамасть кинеми, хăйне йăпанмалăх килте чăх-чĕп усрать, кушакпа йытă та пур. Темиçе çул каялла сурăх-качака та пурччĕ унăн, пăхма йывăр тесе пĕтерчĕ. Çамрăкла ĕçе хăнăхнăскерĕн кĕрĕк арки йăваласа ларас килмест, кунĕн-çĕрĕн килтĕрĕшре тем кăштăртатать. «Хĕр чухнехи пек вăй-хăват пулсан юхан шыв урлă ишсе каçăттăмччĕ», – шӳтлет ватăскер. Паллах, паянхи çамрăксем пăлахая персе пурăнни ăна та пăшăрхантарать. «Чылай çул каялла кашни килте картиш тулли выльăх-чĕрлĕх пулнă. Халĕ ялта 15 ĕне кăна, вĕсен йышĕ çултан çул сахалланать», – пĕлтерчĕ Маруç аппа.**

**Чăннипех çапла, çавăнпах пулĕ сĕтел çинче лавккара туяннă юр-вар кăна. Хамăр та çăкăр-кулачне илме хăнăхрăмăр. Кăмакаран тин тухнă вĕри çăкăр куç умне тухать те – ача чухне кăпăклă та ăшă сĕт тутанса ӳснине маннă çамрăксене вара хĕрхенес килет. «Хальхи вăхăтра килти апат-çимĕç лавккари пур тавартан та пин хут усăллăрах», – тет хулара 50 çул пурăнакан аппам. Çак сăлтавпах ялта тата хула çывăхĕнчи дачăра пахча çимĕç лартса çитĕнтерет. Çамрăках мар пулин те çу каçа ялтан хулана çӳреме ӳркенмест. Хăйне валли те, тăванĕсене хăналамалăх та çителĕклĕ унăн улми-çырли.**

**Юрать-ха, çулла пахча çимĕç ӳстереççĕ. Çапах та... Тен, малашлăхра ăна та лавккара туянма тытăнĕ ял халăхĕ?**

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**




Паян ăмăр çанталăк пулать, юр çăвать. Çил анăçран çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 0, каçхине 2 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 742 мм, сывлăшри нӳрĕк 92 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 50 минут.**

# Палăк умне чечексем хунă



Нарăсăн 15-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкарта «Çĕнтерÿ» асăну комплексĕнче интернационалист салтаксен палăкĕ умне чечексем хунă çĕре хутшăннă.

Унта çавăн пекех Афганистан Республикинчи çапăçусен ветеранĕсем, федерацин ĕç тăвакан влаç органĕсен Чăваш Республикинчи органĕсен ертÿçисем, ЧР Министрсен Кабинечĕн членĕсем, республикăн Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, Шупашкар хулин ертÿçисем, общество организацийĕсен представителĕсем хутшăннă.

Чăваш Енри хуласемпе районсенче Афганистан Республикинче çапăçусем вĕçленнĕренпе 25 çул çитнине халалланă мероприятисем иртнĕ.

■ А.ВАСИЛЬЕВА

*Пулни-иртни*

# Çул çинче – вăрçăри пек

***Çак вăрçăра пĕри те парăнасшăн мар: водительсем çуран çÿрекенсене тапăнаççĕ, çуран çÿрекенсем руль умĕнчи çынсене ылханаççĕ. Ятлаçаççĕ-харкашаççĕ кăна мар, тепĕр чух тытăççах каяççĕ.***

Нумаях пулмасть Шăмăршă районĕнчи Тăрăн ялĕнчен хыпар çитнĕ хыççăн полицин вырăнти пайне кăна мар, Патăрьелĕнчи йĕркелĕх хуралçисене, ЧР ШĔМĕн уголовлă шырав управленийĕн сотрудникĕсене те тревогăпа çĕклеме тивнĕ. Васкавлă медпулăшу машинипе больницăна илсе килнĕ çын пĕлтернĕ тăрăх – ашшĕ-амăшĕн килĕ патĕнче ăна палламан çынсем тапăннă, пĕр шелсĕр хĕненĕ, укçине çаратнă иккен. Хăй вăл Çĕнĕ Шупашкарта пурăнать, унăн машина сутнăшăн илнĕ укçи, кĕсье телфонĕ тата мăйĕнчи ылтăн вăчăри çухалнă имĕш. Ăна пулăшма васканă пиччĕшĕ те патак çинĕ...

Анчах ĕç-пуçа тĕпченĕ май оперативниксен хăш-пĕр самант тĕлĕшпе иккĕленÿ çуралнă. Малтан машинăна хуçи эрне каяллах сутни палăрнă. Тĕрĕссипе, сутман та – пĕлĕшĕн автомобилĕпе улăштарнă. Унтан полицие хайхискерĕн тăванĕсем шăнкăравланă – «вăрланă» телефона килĕнче тупнă-мĕн. Çийĕнчен «сĕмсĕр хурахсем» те /вĕсен йĕрĕ çине сыщиксем часах ÿкнĕ/ пĕр саслăн тенĕ пек çирĕплетнĕ: арçынна кăшт хăлха чикки панă кăна – унăн укçи-пурлăхне тĕкĕнмен.

Вĕсем – Шăмăршăсем. Çав çамрăксене ял çыннисем курса юлнă автомашина тăрăх тупнă. Виççĕшĕн пирки те питех те йĕркеллĕ çынсем теейĕмĕн, иккĕшĕ маларах судпа та айăпланнă, анчах çĕрлехи пăтăрмаха шăпах вĕсем сăлтавлани иккĕленÿллĕ. Хăйсем ăнлантарнă тăрăх – ÿсĕр арçын çул варрипе утса пынă. Автомобиль çывхарса пыни ним те мар тейĕн – пăрăнас шухăшĕ çук. Водительпе пассажир çакăн пирки кăмăлсăрлансан ÿсĕрскер вĕсене виç сас паллирен тăракан паллă «адреспа» ăсатнă. Тытăçу çакăнтан пуçланнă.

Полицин Патăрьелĕнчи пайĕн пуçлăхĕ Андрей Фомин каланă тăрăх – ĕç-пуçа уçăмлатма тивет-ха. Тĕрĕслев материалĕсем пур, тен, уголовлă ĕç пуçарма та лекĕ. Анчах – Çĕнĕ Шупашкар çынни ыйтнă пек «çарату» е «хурахла тапăну» статьяпа мар. Çынна хĕненĕшĕн явап тытма тивет пуль. Шар курнăскер вара хăйне кÿрентернисене тавăрас шутпа çирĕпрех явап тыттарас тенĕ-тĕр – çавăнпа укçипе пурлăхне çаратни пирки суйнă пулас. Вăл полици ĕç-пуçа çаплах тĕплĕн тĕпчессе кĕтмен ĕнтĕ...

Çул çинчи çакнашкал тепĕр хирĕçÿ вара перкелешÿпе вĕçленнĕччĕ. Вăл Шупашкарта пĕлтĕрхи кĕркунне пулнăччĕ. Хĕрĕнкĕ çамрăксем тротуар çинче тăман, çула пÿлсе хунă. Эрех ĕçсе хăюланнăскерсем кампа та пулин хирĕçме сăлтав ыранă ахăр. Çăмăл машина иртсе каяйман та – унăн водителĕпе пассажирĕ кусене асăрхаттарнă. Сăмах çине сăмах, анчах тăвата çамрăк çул çинчен пăрăнас темен.

Машинăри пассажир тарăхса кайнă, пневматика пистолечĕ кăларнă та каччăсенчен пĕрне уринчен пенĕ. Патăрьел çыннишĕн çак пăтăрмах хурлăхлă вĕçленме пултаратчĕ, анчах право хуралĕн органĕсен ĕçченĕсем ĕç-пуçа уçăмлатма пултарнă. Полицин 1-мĕш пайĕнче тĕрĕслев иртернĕ те ВАЗăн çамрăк пассажирĕ, нумаях пулмасть çеç çартан таврăннăскер, тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарма хирĕçленĕ. Дознавательсем вăл çынна хÿтĕленсе пенĕ тесе йышăннă.

Юрать-ха, мишень пулса тăнă çамрăк йывăр суранланман. Стрелок вара çак пăтăрмах хыççăн текех хĕç-пăшалпа çÿрес мар тенĕ: илĕр, тем курса тăрас пур... Чăнах та, пирĕн çулсем çинчи хирĕçÿсенче тем те пулма пултарать.

■ Ольга ПАВЛОВА

# Яваплăха хамăрăн та туймалла

***Нарăсăн 15-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăн муниципалитет йĕркеленĕвĕсен тата хула округĕсен ертÿçисемпе видеоконференци мелĕпе канашлу иртернĕ.***

Чăваш Енĕн Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров пĕлтернĕ тăрăх – 2014 çулхи нарăсăн 14-мĕшĕ тĕлне республикăра пушарсен шучĕ пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан – 22,7%, вилнисен йышĕ 42,1% ÿснĕ.

Пушарсен тĕп сăлтавĕсем – кăмакасем тумалли тата вĕсене ĕçлеттермелли йĕркене пăсни /50 тĕслĕх/, электрооборудование вырнаçтармалли тата ĕçлеттермелли йĕркене пăхăнманни /38/, вутçулăмпа асăрханусăр пулни /29/. Асăрханулăх çитменнипе пушарта çынсем çав-çавах вилеççĕ, вилнĕ 27 çынран 13-шĕ ÿсĕр пулнă. Хĕрлĕ Чутай, Вăрнар, Пăрачкав, Тăвай районĕсенче пушарсен шучĕ тата вилнисен йышĕ ÿснĕ.

Михаил Игнатьев пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе мĕнле мерăсем йышăнни çинчен çак районсен администрацийĕсен ертÿçисем тунă докладсене итленĕ. Администрацисен пуçлăхĕсем каланă тăрăх – районсенче халăхпа тĕл пулусем йĕркелеççĕ, унта пушар хуралĕн ĕçченĕсем те хутшăнаççĕ, килсем тăрăх çÿреççĕ, профилактика материалĕсене анлăн сараççĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ туса иртерекен ĕçе тишкерсех тăмаллине палăртнă. «Çынсен хăрушсăрлăхĕн мерисене тивĕçтересси пирĕншĕн тĕп вырăнта пулмалла. Ăнăçсăр çемьесемпе ĕçлемелле, вĕсене пурне те шута илмелле», – тенĕ Михаил Игнатьев районсен пуçлăхĕсене.

Пурлăха пушарсенчен страхлас ыйтăва çĕкленĕ. Республика Пуçлăхĕ палăртнă тăрăх – ял тăрăхĕсенче халăхпа иртерекен пухусене страхлакан компанисенче ĕçлекенсене ытларах явăçтармалла, пурлăха страхлани пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине пайăр тĕслĕхсемпе ăнлантармалла.

«Пурлăха страхласси норма пулса тăмалла. Ăнланмалла ĕнтĕ: çынсене эпир инкекре нихăçан та хăварман. Çапах та пушар тухсан вĕсен республика бюджетне çеç шанмалла мар. Хăйĕн çемйин пурлăхĕшĕн, тăнăçлăхĕшĕн кашнин яваплăха туймалла», – калаçăва пĕтĕмлетнĕ Михаил Игнатьев.

2013 çулта Пĕрлехи информаци кунĕсем иртерни, 2014 çулхи тĕллевсем çинчен Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертÿçи Александр Иванов пĕлтернĕ. Пĕлтĕр çивĕч тăракан 36 темăпа Пĕрлехи информаци кунĕсем 9 хут иртернĕ, граждансен 241 ыйтăвне пăхса тухнă. Халăха çулсем тăвас тата юсас, пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх, медицина, вĕренÿ ыйтăвĕсем ытларах хумхантараççĕ.

ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертÿçи ыйтусен 30% яхăн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен татса памаллине палăртнă. Муркашпа Çĕрпÿ /24-шар ыйту/, Пăрачкав /19/ районĕсенче, Шупашкар хулинче /15/, Сĕнтĕрвăрри /14/, Красноармейски /13/ районĕсенче, Çĕмĕрле хулинче /12/ пурăнакансенчен ыйту ытларах килнĕ.

2014 çулăн I çурринче Пĕрлехи информаци кунĕсем иртермелли графика çирĕплетнĕ.

■ А.ЛЬВОВА

*Вĕренÿ*

# Поварсем валли

***Нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарти апат-çимĕç технологийĕпе коммерци техникумĕнче вĕренÿ çĕнĕ цехĕ уçăлнă.***

Асăннă заведенин кулинари цехне уçмашкăн хутшăннă май Владимир Иванов министр çапла палăртнă:

– Республикăра хальхи вăхăтра ачасен сывлăхне упрас тата çирĕплетес тĕлĕшпе тимлĕхе вăйлатни сисĕнет. Ача сачĕсенче, шкулсенче апатлантару культурин шайĕ ÿсет. Столовăйсене çĕнĕ йышши оборудовани лартнипе кăна çырлахма май çук – специалистсен квалификацийĕ те тивĕçлĕ шайра пулмалла. Кунта, вĕр çĕнĕ цехра, çĕнĕ оборудовани вырнаçтарни малашне ччăннипех пысăк ăстасене вĕрентсе хатĕрлес шанчăк çуратать.

Пулас ресторагорсемпе шеф-поварсем, технологсем министр сăмахĕсем тÿрре тухасса систернĕ: лаборатори презентацийĕн вăхăтĕнче вĕсем чăваш, вырăс, яппун, итальян апат-çимĕçĕ янтăлассипе ăсталăх класĕ иртернĕ.

■ Влада МИРСКАЯ

*Ăсталăх*

# «Пĕтĕм çитĕнĕвĕм – спорта пула»



***«Олимп вăййисене пĕрре хутшăнса курнă спортсмен унта тепре те лекме ĕмĕтленет, – тет хăвăрт утас енĕпе тĕнче спорт мастерĕ, Тĕнче кубокĕн бронза призерĕ, XXVI çуллахи Олимп вăййисене хутшăннă Елена Грузинова. – Олимпиада – кирек камшăн та пысăк уяв, спортсменсемшĕн вара вăл – пурнăçри чи пĕлтерĕшлĕ пулăмсенчен пĕри.»***

Елена Николаевна Атлантăра 1996 çулта иртнĕ çуллахи Олимп вăййисене паянхи кун та ырăпа аса илет. Унта 10-мĕш вырăн йышăннă пулин те çакнашкал ăмăртусенче вăй виçме тÿр килни те çĕнтерÿпе танах. «Спорт мана çынсемпе хутшăнма, хамăн ĕçе юратма хăнăхтарчĕ. Шăпах ăна пула халĕ манăн тус-юлташ, пĕлĕш нумай. Пĕрле ăмăртнă Елена Николаевăпа, Алина Ивановăпа, Олимпиада Ивановăпа, Владимир Андреевпа, Елена Сайкопа, Елена Аршинцевăпа /Мордва Республики/ халĕ те çыхăну тытатпăр. Ун чухнехи тата хальхи пĕтĕм çитĕнĕвĕме спорта пула тума май килчĕ. Унсăр пуçне вăл тĕнче курса çÿреме, тĕрлĕ хулана çитме пулăшрĕ», – чунне уçать тĕнче спорт çăлтăрĕсен йышне лекме пултарнăскер.

Елена Грузинова /Бронюкова/ ача чухнех спортпа туслашнă. Иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕпе аппăшне кура вăл та 4-мĕш класа куççан çăмăл атлетика секцине çÿреме тытăннă: çулла чупнă, хĕлле йĕлтĕрпе ярăннă. Кĕçех çитĕнÿсем тума пуçланă. Сĕтелçи теннисĕ енĕпе район чемпионки пулнă. 6-мĕш класранпа вара республика шайĕнче палăрма тытăннă, хĕллехи тата çуллахи полиатлон чемпионачĕсенче пĕрре мар çĕнтернĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Туктамăш шкулĕнче вĕренекен хĕр ача Людмила Михуткина /çăмăл атлетика/ тата Николай Судаков /йĕлтĕрпе чупса ăмăртасси/ тренерсем патĕнче ăсталăха туптанă. Хастарскер çав вăхăтрах волейболла та, баскетболла та, теннисла та вылянă, ку енĕпе иртекен ăмăртусене хутшăннă.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетне вĕренме кĕрсен те спортран писмен Елена. Мĕншĕн шăпах хăвăрт утассине суйласа илнĕ-ха вăл? «Ăнсăртран пулса тухрĕ. Йăмăкăм Надя педучилищĕре вĕренетчĕ. Пĕррехинче ун патне кайрăм та тăванăм спортăн эпĕ халĕччен пĕлмен-курман тĕсĕпе аппаланнине асăрхарăм. Пĕрле хам та утса пăхас терĕм. Виктор Семенов тренер хирĕçлемерĕ. Каярахпа университетра та хăвăрт утакансене хатĕрлекен Авенир Ермолаев тренер пуррине пĕлтĕм. Паллах, вăл иртерекен тренировкăсене кайма пуçларăм», – иртнине куçĕ умне кăларать Е.Грузинова. Шăпах Авенир Хрисанфович, физвоспитани кафедрин преподавателĕ, ертсе пынипе хĕр спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне тултарнă. Каярахпа вăл Геннадий Семенов тренер патне куçнă, Совет Союзĕн çамрăксен пĕрлештернĕ командин йышне кĕнĕ. 1989 çулта çĕр-шыв чемпионачĕн призерĕ пулнă. Çакăн хыççăн спорт пирки вăхăтлăха манма тивнĕ: Елена çав çулах качча кайнă, ача çуратнă. Спортсăр пурăнма пултарайманскер çулталăк çурăран каллех тренировкăсене çÿреме пуçланă. Раççей çамрăксен ăмăртăвĕнче 5 километрлă дистанцие вăл иккĕмĕш вĕçленĕ. Тренерсем ăна çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командин – хальхинче çитĕннисен – йышне кĕртнĕ. Кĕçех спортсменка Ярославльтен Раççей кубокĕпе таврăннă, Челябинскра иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери турнирта – 2-мĕш, Мускаври «Вырăс хĕлĕ» ăмăртура 1-мĕш вырăнсене йышăннă. Китайра 1994 çулта йĕркеленĕ Тĕнче кубокĕнче – бронза призерĕ. Е.Грузинова республикăра чи малтан «арçынсен» дистанцине – 20 километра – парăнтарма пуçланă. 1996 çулта 10 километр хăвăрт утас енĕпе чи лайăх спортсменсен йышне лексе Олимп вăййисене хутшăннă.

Елена Николаевна кĕçех пысăк спортпа сыв пуллашнă, хăйĕн профессийĕпе ĕçлеме пуçланă. Мĕншĕн паллă нумай спортсмен пек тренер пулас, çамрăк ăрăва ăсталăхне туптамашкăн хăнăхтарас темен-ха вăл? «ЧПУн медицина факультетĕнче вĕреннĕ вăхăтрах Олимп резервĕсен училищине пĕтертĕм, çавна май манăн тренер-преподавательте ĕçлемешкĕн ирĕк пур. Анчах çак çула суйлас темерĕм, мĕншĕн тесен врач дипломне сая ярас килмерĕ. Медицинăна питĕ юрататăп», – чунне уçать Е.Грузинова. Малтан ЧПУн сывлăх пунктĕнче врач-терапевтра тăрăшнă, 2000 çултанпа вара Шупашкарти Васкавлă медицина пулăшăвĕн больницинче акушер-гинекологра вăй хурать. 2012 çулта вăл кĕлетке йывăрăшĕ çитмен хĕрарăмсен ача çуратма пултараслăхĕпе çыхăннă диссертаци ĕçне ăнăçлă хÿтĕленĕ, медицина наукисен кандидачĕ пулса тăнă. Пысăк квалификациллĕ специалист пĕлтĕртенпе ЧПУра çур ставкăпа преподавательте те ĕçлет.

Хастарскер спорт пирки халĕ те манмасть: çемйипе йĕлтĕрпе ярăнаççĕ, бассейна кайса килеççĕ. «Çăлтăрпа» иртернĕ ирхи зарядка», «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» – çакăн йышши мероприятисемпе ăмăртусенчен те айккинче юлмаççĕ. Пĕлтерĕшлĕ тепĕр самант – Елена Николаевна Шупашкарта 2013 çулхи раштав уйăхĕн 27-мĕшĕнче иртнĕ Олимп çулăмĕн эстафетине хутшăнни. Ăна Олимп çулăмне Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйĕн дистанцийĕ хыççăн панă. «Çак эстафетăна хутшăнма сĕнсен хаваспах килĕшрĕм. Çуралнă кунăм тĕлне чăнчăн пысăк парне пулчĕ ку. Олимп вăййисен тĕп символне алăра тытни – савăнăçлă, çав вăхăтрах хумхануллă самант. Факела туянтăм, ăна та, эстафетăра тăхăннă спорт костюмне те асăнмалăх упратăп», – хĕпĕртевне пытармасть тĕнче спорт мастерĕ. Халĕ, Сочире XXII хĕллехи Олимп вăййисем пынă тапхăрта, вăл ытти нумай çын пекех ăмăртусене пăхать. Уйрăмах биатлонпа, йĕлтĕрçĕсен чупăвĕпе, пăр çинче эрешлесе ярăнассипе, хоккейпа кăсăкланать. Отпускра пулнă тăк Олимпиадăна кайса курма, хамăрăннисемшĕн «чирлеме» хирĕç марччĕ тет.

Çапла, пур çĕре те ĕлкĕрет Елена Грузинова. Вăл хăйне мăшăрĕпе ачисем пулăшсахавхалантарса тăнăран ĕç ăнса пынине палăртать. Сăмах май, кĕçĕн хĕрĕ Катя, Шупашкарти 5-мĕш гимназире ăс пухаканскер, спорт гимнастикипе туслă. Амăшĕ ăна ырă сĕнÿ-канаш нумай парать. Елена Николаевна пушă вăхăтра хĕресле тата вĕтĕ шăрçапа тĕрлеме юратать. Çак чун туртăмĕ пысăк спортра çитĕнÿсем тунă чухнех çуралнă иккен. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче хитре çипсене чикĕ леш енчен илсе килнĕ. Халĕ ав хамăр тăрăхра та тем тĕрли те пур: суйлама çеç ан ÿркен. «Пĕр тĕрлеме пуçласан ĕçе вĕçлемесĕр те пăрахас килмест, хăш чухне çĕрĕпех ларатăп», – тет. Турăшсем уйрăмах хитре пулаççĕ унăн. Елена Николаевна вĕсене рамкăна вырнаçтарса чиркĕве илсе каять, пачăшкăсем сăвапланă хыççăн çак тĕрĕсене сывăх çыннисене, тантăшĕсене парнелет. Унсăр пуçне вăл Хĕрлĕ Чутай районĕнче пурăнакан ашшĕпе амăшĕ – Николай Степановичпа Ольга Григорьевна Бронюковсем – патне тăтăшах кайса çÿрет, пахчара тата кил-тĕрĕшре пулăшать.

■ Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА

Госслужба занятости Чувашии

# Чăваш Республикинчи ĕç рынокĕн 2013-2014 çулсенчи тĕп кăтартăвĕсем

**Ĕçсĕр граждансен йышĕ, çын**




**Шута илнĕ ĕçсĕрлĕх шайĕ, процентпа**




**Çивĕчлĕх коэффициенчĕ, единица**




**Пĕтĕмĕшле ĕçсĕрлĕх шайĕ çулталăкра вăтамран, процентпа**




*Пĕтĕмĕшле тата регистрациленĕ ĕçсĕрлĕх шайĕ*

2014 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕ тĕлне регистрациленĕ граждансен /ĕçлев центрĕсенче регистрациленĕ граждансен йышне тата экономикăна пуçарулла хутшăнакан халăх шутне танлаштарни/ республикăра 0,75 процент пулнă е 2013 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчинчен /0,84 процент/ 0,09 процент пункчĕ сахалрах.

Пĕтĕм тĕнчери ĕç организацийĕн /МОТ/ методологийĕпе палăртнă ĕçсĕрлĕх шайĕ 2013 çулхи юпа-раштав уйăхĕсенче экономикăна пуçарулла хутшăнакан халăх йышĕпе танлаштарсан вăтамран 4,9 процент шутланнă /2012 çулхи юпа-раштав уйăхĕсенче – 4,7 процент/.

*Юрăхлă ĕç шырас тĕллевпе тата ĕçсĕр пулнипе регистраци учетĕнче тăракан граждансен йышĕ*

2014 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Республикинче официаллă майпа шута илнĕ ĕçсĕр çынсен хисепĕ 4939-па танлашнă е иртнĕ çулхи çав тапхăртинчен 783 çын /13,7 процент/ сахалрах.

*Ĕç рынокĕнчи кăткăслăх коэффициенчĕ*

Ĕç рынокĕнчи кăткăслăх коэффициенчĕ /пĕлтернĕ пĕр ваканси пуçне тивекен ĕçсĕр граждансен шучĕ/ 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 0,3 единицăпа танлашнă /пĕлтĕрхи çав вăхăтра – 0,4 единица/.

*Ĕçпе тивĕçтерекенсем ыйтакан специалистсем, çав шутра экономика ĕçĕ-хĕлĕ тĕсĕсем тăрăх*

2014 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕ тĕлне 305 ĕçпе тивĕçтерекен пушă вырăнсене, должноçсене йышăнма çынсем кирли пирки кăтартусем панă. Вакансисен шучĕ 15452 единицăпа танлашнă.

Вĕсем экономика ĕçĕ-хĕлĕн çак сферисемпе ытларах çыхăннă: туса кăларакан производство – 4,5 пин, курттăм тата вак суту-илÿ – 1,7 пин, строительство – 1,6 пин единица. Пулă тытас тытăмра ваканси чи сахалли – 1 единица кăна, çĕр айĕнчи пуянлăхсене кăларнă çĕрте кăшт нумайрах – 11 единица.

*Чăваш Республикинчи ĕç рынокĕ ыйтакан профессисен /специальноçсен/ перечене, вăтам шалăва кăтартнипе пĕрле*

Рабочи специальноçĕсемпе уйрăмах ыйтакан профессисен шутĕнче: тĕрлĕ ĕç тăвакан /11336,0 тенкĕ/, çĕвĕç /10933,0 тенкĕ/, повар /11433,0/, автомобиль водителĕ /14972,0 тенкĕ/, апат-çимĕç шутланман тавар сутуçи /12175,0 тенкĕ/, урам шăлакан /6838,0 тенкĕ/, кондуктор /10968 тенкĕ/, кирпĕч купалакан /22778 тенкĕ/, слесарь-юсавçă /15296,0 тенкĕ/.

Служащи специальноçĕсемпе çаксем ытларах кирлĕ: медицина сестри /7728,0 тенкĕ/, специалист /12714,0 тенкĕ/, менеджер /14510,0 тенкĕ/, хурал тăракан /10440,0 тенкĕ/, инженер /16966,0 тенкĕ/, кĕçĕн воспитатель /6264,0 тенкĕ/.

Республикăри ĕç рынокĕнче çак профессисем ытлашши: бухгалтер, сыхлавçă, ĕç инспекторĕ, экономист тата ыттисем.

Пĕлтернĕ вакансисем тăрăх уйăхри вăтам ĕç укçи 13089,0 тенкĕпе танлашнă.

**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин.**

# Салтак яланах салтак

Çитес çул тăхăр вуннă тултаракан Михаил Еремин кĕлеткине халĕ те тÿрĕ, çирĕп тытать: салтак вăрт-вартлăхне паянччченех упраса хăварнă. Урама уçăлма тухсан ăна тăтăш куратăп. Шинельтен çĕлетнĕ кĕске пальтине ытларах кăмăллать пулас: кирек хăçан та çав çи-пуçпа çÿрет. Кун пирки сăмах хускатрăм та – Михаил Семенович акă мĕнле хуравларĕ: «Эпĕ çав шинельпе шăннă Ладога тăрăх хырăмпа шунă, унпах пăрланнă Нева урлă каçса çÿренĕ, çапăçусем вăхăтлăха шăпланнă самантра çĕр пÿртре ай сарăм тунă. Çав шинель маншăн – хыçа тăрса юлнă вутлă çамрăклăхăма аса илтерекен сăваплă реликви».

Ветеран калаçу йĕрне урăх еннелле куçарчĕ: «Вăхăт çав тери шелсĕр иккен. Никама та хĕрхенмест. Блокадăри Ленинграда ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çынсем 4-5 çул каялла Йĕпреç тăрăхĕнче вуннăччĕ. Паян эпĕ пĕччеnex».

Михаил Еремин Пенза облаçĕнчи чăвашсем йышлăн пурăнакан Неверкино районĕнчи Алешкино ялĕнче çуралнă. Ашшĕ-амăшĕ ăна вăрманлă Йĕпреç тăрăхне илсе килнĕ. Вырăнти шкулта пĕлÿ илнĕ хыççăн Улатăрти чукун çул техникумне кайса кĕнĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă çул вăл хăйĕн ÿсĕмĕнчи яшсемпе пĕрле хулари çар комиссариатне васканă, анчах... Чăваш каччи 1943 çул пуçламăшĕнче тин Мускава çул тытнă. Чăваш çĕр-шывĕнчен çула тухнă эшелон тĕп хулара кăшт кăна чарăнса тăнă. Вăл Нева çинчи хула еннелле васканă. Ку тĕлте ватă салтака сăмах парасшăн: «Ленин хулине çитиччен 100-150 çухрăм пек юлсан пире йĕри-тавраллах вăрман хупăрласа илнĕ пысăках мар станцире антарчĕç. Пикенсех çапăçу ăсталăхне алла илме тытăнтăмăр». Тепĕр виçĕ уйăхран Ленинград фрончĕн йышне кĕртнĕ 169-мĕш артиллерипе зенит полкĕн салтакĕсем пулса тăтăмăр. «Ку полкра çапăçма шăпа тухнăшăн савăнăр, – терĕ пире Н.Симоняк комиссар. – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнăранпа ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе икĕ хутчен наградăланă. Эсир, çамрăксем, полкăн чысĕпе мухтавне тата та çÿлерех çĕклессе шанатăп».

Çапла пулса тухнă та. Михаил Еремин миномет батальонне лекнĕ. Ăна 1944 çулхи кăрлачăн 4-мĕшĕнче ункăри Ленинград хулине тăшманран ирĕке кăларма тÿр килнĕ. Фронтовик каланă тăрăх – пирĕн салтаксем виçĕ эрне пĕр лăш курмасăр, кунĕнçĕрĕн тенĕ пек фрицсем çине вут-хĕм тăкнă. Атака хыççăн атакăна çĕкленнĕ совет воинĕсем çавăн чухне хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Блокадăна сирнĕ хыççăн çапăçусенче уйрăмах палăрнисене наградăсемпе чысланă. Михаил Еремин кĕçĕн сержантăн кăкăрне те II степень Тăван çĕр-шывăн вăрçи орден илемлетнĕ. Кайран ку полк Балтика тăрăхне, Беларуçе, Молдавие тăшманран тасатма хутшăннă.

Аслă Çĕнтерÿ хыççăн та тăван тăрăха тăруках таврăнайман Михаил Еремин. Вăл салтак пăттине тата 10 çул çинĕ. Ăна, çар училищинчен ăнăçлă вĕренсе тухнă лейтенанта, Инçет Хĕвел тухăçне ăсатнă. Командирсен ушкăнне Китай Халăх Республикине янă. Вĕсен хушшинче пирĕн ентеш те пулнă. Командировка 1955 çулччченех тăсăлнă. Михаил Семенович асăннă çĕр-шыв ертÿлĕхĕ хăйне чысланă «Туслăха упранăшăн» медале халĕччченех тирпейлĕн упрать.

Мирлĕ пурнăçра та вăл салтаках пулса юлнă: 1956 çултан пуçласа 2000 çулччченех Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкул ачисене пуçламăш çар пĕлĕвне вĕрентнĕ. Отставкăри майор пĕлтĕрччченех общество ĕçне хастар хутшăннă: малтан районти, унтан Йĕпреç поселокĕнчи ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕсен ертÿçи пулнă. Халĕ те вăй çитнĕ таран çамрăксемпе вĕренекенсен хушшине тухать.

■ Геннадий КУЗНЕЦОВ

Аван-и, тăванăм?

# ЧĂВАШ ТĔНЧИ

Хушма кăларăм

*Çыхăнусем*

Чăваш Енре
Культура çулталăкĕ

## Йăхташăмăрсене кĕпĕрнаттăр саламланă

***Мурманскри С.М.Киров ячĕллĕ культурăпа халăх пултарулăх керменĕнче ку тăрăхра пурăнакан тĕрлĕ наци çыннисен йăлана кĕнĕ «Туслăх фестивалĕ» иртнĕ. Кăçалхипе тăххăрмĕш хут.***





Уяв тĕллевĕ – Мурманск облаçĕнче пурăнакан халăхсен ырă йăли-йĕркине упраса хăварса аталантарасси, тĕрлĕ наци çыннисен хушшинчи туслăха çирĕплетесси, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентесси тата çамрăк ăрăва Раççей халăхĕн культура пуянлăхĕпе наци йăли-йĕркине çывăхрах пулма хăнăхтарасси.

Концерт умĕн Мурманск облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Марина Ковтун Кольск тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен представителĕсемпе тĕл пулнă. Пысăк пĕлтерĕшлĕ çак мероприятие ирттерме тĕплĕн хатĕрленнĕшĕн тав тунă, малашлăхра ăнăçу суннă. «Чăваш Ен» общество канашĕн председателĕ Валериан Гаврилов Чăваш Республикинчи культурăпа экономика, физкультурăпа спорт аталанăвĕ, Чăваш наци конгресĕн ĕçĕ-хĕлĕ, Мурманск облаçĕнчи чăвашсен пĕрлĕхĕ ирттерекен мероприятисем пирки каласа кăтартнă. Культурăпа халăх пултарулăх керменĕн фойинче наци культура пĕрлĕхĕсем халăх тумĕсен, декорацие хушма искусство хатĕрĕсен, музыка инструменчĕсен куравне йĕркеленĕ, юрăташăпа савăнтарнă.

Чăваш культура общества Чăваш Республикинче туса кăларакан апатçимĕçрен сĕтел хатĕрленĕ. Чăвашсем Мурманскра пурăнакансене хăнасене яланах тараватт, халăх çăкăр-тăвартан пуян пулнине тепĕр хут çирĕплетрĕç, – çырса пĕлтерчĕ Вăрмар районĕнчи Пысăк Енккассинче çуралса ӳснĕ, «Шупашкар» ООО генеральнăй директорĕ, Мурманскри Чăваш культура обществин Канашĕн членĕ Дмитрий Осипов. Кĕпĕрнаттăра хăйсем туса кăларакан пылак çимĕçсем парнеленĕ, Вăрнарсен шăрттанне, Элĕксен пылак шывне тутанса пăхма сĕннĕ.

«Хальхи фестиваль пире пĕр-пĕрне лайăхрах пĕлме тата çывăхрах пулма пулăшать. Çапла вара пирĕн «пĕрлехи çурта» – Мурманск облаçне – татах та ăшăрах, тирпейлĕрех тума май парать. Эпир – пысăк пĕр çуртра пурăнакансем. Ырă кӳршĕсен пĕр-пĕрне хисеплемеллех. Çурçĕрте тĕрлĕ наци çынни тĕпленнĕ. Вăхăт çирĕплетрĕ: уйрăмлăх пире пĕрре те ютшăнтармасть. Пачах урăхла – туслăха çирĕплетет кăна», – тенĕ Марина Ковтун кĕпĕрнаттăр.

Концерт вăхăтĕнче наци автономийĕсемпе пĕрлешĕвĕсен представителĕсем Туслăх йывăçне «чĕртнĕ». Йывăç çине Мурманск облаçĕн гербне вырнаçтарнă. Светлана Абрашкина тата Валериан Гаврилов Туслăх йывăçĕ çине «Чувашия» тесе тĕрлесе çырнă транспарант çакнă.

■ **А.ХОВАНСКИЙ**

*Хаклав*

## Пушкăрт чăвашĕсен пурнăç çулĕ çинчен

***Иртнĕ çул вĕçĕнче Василий Антонов прозаикăн, поэтăн, журналистăн «Хĕвел тухас умĕн» кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Вăл ăс-шухăшăма, кăмăл-туйăма хумхантарчĕ.***

Юлашки çулсенче нумай ăсчах, çыравçă тăван ялĕн, тавралăхĕн кун-çулне тишкерсе кĕнекесем кăларчĕç. В.Антонов та Пушкăрт чăвашĕсен пурнăç çулĕ çинчен çырать. Лайăх çырать!.. Паян кун та кĕнекери йĕркесем: «Ах, этем ятне илме çăмăл та вăл, этем пулма сĕре йывăр...» – пуçра явăнаççĕ. Тĕрĕс ĕнтĕ: халь нумайшĕ этемрен этемккене çаврăнать.

Пурнăçра Василий Сергеевичпа пĕрре те тĕл пулса калаçман. Апла пулин те вăл çырса кăтартнисене вуланă хыççăн эпĕ унăн тăван ялĕнче – Пушкăртстанри Мияки районĕнчи Çĕнĕ Хурамалта – пахчара «пиçнĕ памидорсене тататăп, петрушкине касатăп, суханне чĕлетĕп»; сĕтел хушшинче «салма яшкине, пӳремечне, хуплуне, чепчекне, чăкăт-турăхне, сĕт-çуне» тутанатăп.

Унăн пултарулăхĕпе «Шыв сикки», «Вăрттăн телей», «Ватă ăшши», «Салам, ялăм», «Ик çырма хушшинче», «Пĕрле пулар», «Неповторимое счастье» кĕнекисене вуласа паллашнăччĕ. Тĕлĕнсе вуланăччĕ. Кашни ĕçне савăнса кĕтсе илнĕччĕ. Чăваш халăх сăвăçи Порфирий Афанасьев çапла палăртать: «Василий Антонов вулакана тыткăна илекен илемлĕх меслечĕсем тупма, ăста, халĕччен никам усă курман танлаштарусемпе кĕтмен çаврăмсем ӳкерсе кăтартма пултарать. Сăвăçăн сăмахĕсене кĕнекери хăшпĕр тĕслĕхпе çирĕплетер-ха: «Пит пиçет те иртет. Сăмах шăрпăк евĕр тăрăнать те яланлăхах юлать. Ку суран – сыватайми». «Кăсăк та шаян иртнĕ Наркутан». «Çăмăл-и ал-ури, пуян-и ăс-хакăлĕ – калаймастăп!» «Яш чух кăна çын яшт!» «Арçын йăхĕ – вилĕм çави айĕнче: çамрăклах автансăр яла ăсанаççĕ. Ух, пуç мими тухса ӳкмĕ-ши шухăшласа?»

Кĕнеке редакторĕ Петр Андреев писателĕн пултарулăхне аван хак парать: «Чăвашла та, вырăсла та ăнăçлă, ирĕккĕн çырать, ăсталăхне ырми-канми туптать. Унăн канăçсăр та хĕрӳллĕ чун-чĕринчен туйăмлă сăвăсемпе сонетсем, ĕнентерӳллĕ повеçсем, тарăн шухăшлă эссе, сăнарлă та витĕмлĕ поэмăсем, чăн пурнăçа сăнлакан калавсем шăранса тухаççĕ».

Автор çавăн пекех кĕнекере Пушкăртстанра пурăнакан чăвашсен калаçăвĕнчи сăмахсене ăнлантарса панă. Вĕсем чăваш чĕлхин пуянлăхне, ытти халăх культурипе тачă çыхăннине кăтартса параççĕ. Тĕслĕхрен, анпуççи – хул пуççи; ансух – ухмах, тăмсай; ăш-вар – чун-чĕре; ĕссĕмлĕх – пуш сăмах, фантази; йăмăш – çăмăл; какăр – тĕпсĕр тарăн шăтăк; кăрпăк – пирвайхи юр; кĕттермĕш уйăх – çитес уйăх; маса /кĕтсе маса тухрĕ/ – чăтăмлăх пĕтрĕ; нараста – таса, çылăхсăр; пăйма – çăматă; пеле – инкек, нуша; сăхăм – ватă лаша; çиçĕм сирӳçи – громоотвод; талан – телей; туйра – çамрăк юман; туртăллă чун – тăван, хурăнташ; тускăнай – ачалăхри тус; хахать – хыпар, сас-хура т.ыт.те.

Василий Антонов – хальхи пурнăç çыравçи. Унăн «Хальхи юмах», «Пулăшрĕç», «Хура тутăр, шурă тутăр», «Пурнăç хакĕ», «Хула хĕрĕ», «Хăрушă хĕрарăм», «Хăрăк йывăç» калавĕсем паянхи пурнăçа ăнланса илме пулăшаççĕ, йывăр пулсан та малалла утма хистеççĕ.

Василий Сергеевич тин çеç кун çути курнă ĕçĕ пирки çапла çырать: «Калавсенче пăтрашуллă хальхи вăхăтра пурăнакан çынсен тертлĕ кунçулĕпе ырă шухăш-ĕмĕтне сăнлама тăрăшрăм. «Хĕвел тухас умĕн» повеç чухăн халăхăн телейĕпе ирĕклĕхĕшĕн хăюллăн кĕрешнĕ революционер, пултаруллă сăвăç Клавдий Ухик шăпипе таса юратăвĕ çинчен».

Кĕнеке сăнарĕсемпе автор ентешсем кăна мар. Вăл вĕсен кашни утăмне, кăмăл-туйăмне чĕрепе туйса тăрать. Кашнин пирки яланлăхах асра юлмалли сăмахсем тупса çырса кăтартать. «Кăсăк та шаян иртрĕ нартукан /Пушкăрт чăвашĕсен уявĕ – **Авт.**/. Çут çанталăк хăй ачисене савăнтарас хайлапа тӳлек те тăрă тӳпене тулли уйăх тата тетте евĕр илĕртӳллĕ çăлтăрсем çакрĕ. Хи-хи-хи те ха-ха-ха, хо-хо-хо та ух-ух-ух çурчĕç ял шăплăхне». Е тата: «Акă еплерех иккен вăл – юрату тути! Чăн савăк вара: чĕрепе – чĕре, тутапа – тута, кевтепе кевте пĕрлешни пысăкран та пысăк кăвайт-ши?» Кунта икĕ-виçĕ йĕрке çеç, анчах вĕсем нумайлăха аса тăрса юлаççĕ.

Чăнласах та – Василий Антонов хальхи саманари пурнăç тути-масине ăнланса илме пулăшать. Пурнăçăн тĕрлĕ енне чухлани, сăнарсен сисĕм-туйăмне пĕлни, ăс-тăнне уçса пани, кулленхи пулăмсене уççăн курса тăни – В.Антоновăн пысăк пахалăхĕсенчен пĕри. Паллах, чăваш халăхăн чун-чĕрине, кăмăл-туйăмне, самана çыхăнăвĕсене, кăткăс пулăмĕсене вăл Пушкăртра пурăнакан йăхташăмăрсен йăли-йĕрки урлă кăтартса парать.

Пултаруллă прозаикăн, поэтăн, журналистăн В.Антоновăн «Хĕвел тухас умĕн» çĕнĕ кĕнеки вулакансене килĕшессе, шухăша ярасса, кăмăл-туйăмне çĕклессе шансах тăратăп.

■ **Е.ВАСИЛЬЕВ-БУРЗУЙ,**
**педагогика наукисен докторĕ, Раççей Писательсен союзĕн членĕ**

*Тавра пĕлӳ*

## Юррисем хăйне евĕрлĕ

***Николай Герасимович Корсаков 1932 çулта Тутар Республикинчи Теччĕ районĕнчи Победа поселокра çуралнă. Ялти пуçламăш шкулта тăватă çул вĕренсен Ăнăри тулли мар вăтам шкула çӳреме тытăннă. Унтан вĕренсе тухсан Кăнна Кушкине çул тытнă.***

Аттестат илсен офицер пулма ĕметленекен çамрăк Вольскри çар авиацийĕн училищине вĕренме кĕнĕ. Офицер тумне тăхăнсан малтан Клин хули çывăхĕнче, кайран Инçет Хĕвел тухăçĕнче Итуруп утравĕ çинче службăра тăнă. "Материк" çине таврăнсан Армавирти летчиксене хатĕрлекен училищĕре ĕçленĕ. Отставкăна тухсан тăван ялĕ çывăхнерех пулас тĕллевпе Чĕмпĕре куçса килнĕ. "Комета" тата "Марс" заводсенче чылай çул ĕçленĕ.

Смоленск хĕрĕпе Зоя Егоровнăпа çемье çавăрса икĕ ывăл çуратса ӳстернĕ. Иккĕшĕ те халĕ офицерсем. Пилĕк мăнук ӳсет. Николай Герасимович çемйипе пирĕнпе кӳршĕллĕ пурăнакан аппăшĕ патне час-часах хăнана килетчĕ. Хулара тĕпленнĕ офицер тăван юрăсене пĕлни, юрлани мана питĕ тĕлĕнтеретчĕ. Зоя Егоровна Курил утравĕсем çинче пурăннă вăхăтра упăшки офицерсене чăваш юррисемпе савăнтарни çинчен каласа паратчĕ.

Николай Герасимович ялтан 1950 çулта тухса кайнă. Апла тăк вăл юрлакан юрăсем хăй евĕрлĕхне упраса хăварма пултарнă, сăмахĕсене улăштармасăр хальхи куна çитнĕ. "Пĕр юрра юрланă чухне йĕмесĕр чăтаймастăп. Вăл сĕре хурлăхлă. Ĕлĕкрех ăна сан аннӳ те, ыттисем те юрласа пама ыйтатчĕç. Итленĕ чухне вара кашниех куçĕсене тутăрпа шăлса ларатчĕ... Пирĕн таврари юрă мар вăл. Ятне те ас тумастăп. Кăнна Кушкинче вĕреннĕ чухне илтнĕччĕ", – аса илет Николай Герасимович.

Акă çак юрă:

Тухса лартăм крыльца
çине,
Хам савнине эп кĕтрĕм.
Kaç пуласса каç
пулчĕ те –
Манăн савни килмерĕ.
Атя, савни, анне патне –
Чĕмпĕр пасарне каяр.
Сан валли купăс илме те,
Ман валли тупăк илме...

Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Матак ялĕнчи юрăсене мана Геннадий Фадеев илсе килсе панăччĕ. "Атя савни шыв хĕррине" юрăри тăватă çаврăмĕ Николай Герасимович юрлакан юрăри пекех илтĕнет. Малтанхи виçĕ çаврăмне Чăнлă районĕнчи ялсенче те юрлаççĕ иккен. Анчах та вĕсене унта вăйă юрри теççĕ.

Атя, савни, шыв хĕррине
Пурçăн тутăр чӳхеме.
Эпĕ – чӳхĕп, эсĕ –
пăрăн.
Эс авлансан – эп пăрăп.

Николай Герасимовичăн урам юррисем çапларах илтĕнеççĕ:

Чут каяттăм шур Атăла,
Ма тытмарăн алăран.
Тымар янă сар чечек пек
Каймарăн вĕт асăмран!
Эх, савнийĕм, ăçта-ши
эс?
Ăçта курăп-ши сана?
Сан илемлĕ хура куçу
Пăхĕ-ши вара мана?

Николай Герасимович пек çынсем хальхи çамрăксемшĕн мул вырăнĕнчех пулмалла. Тавра пĕлӳçĕсен тĕллевĕ – вĕсене шыраса тупасси, вĕсен пултарулăхне халăх патне çитересси.

■ **Николай РОЗОВ**

*Чăнлăх евĕр юмах*

## Турхан ялĕнчи Раштав умĕнхи каç

***Эпĕ Опанас ятлă. Диканька хуторĕ çывăхĕнче çуралса ӳснĕ. Раштав уявĕ умĕн Шупашкартан Володимир кум шăнкăравларĕ. Ăна Кокель пирки çырнă хайлавĕсем тăрăх Украинăра аван пĕлеççĕ. "Хаклă кум, кил-ха Чăваш Ене, – тет. – Чăвашран тухнă пĕрремĕш епископăн Германăн тăван ялне Турхана çитсе курăпăр. Кокелĕн музей çуртне кайăпăр. Микола утарçăн пылне тата кăрчамине тутанăпăр".***

Илĕртӳллĕ йыхравпа хавхаланса хирĕçлеймерĕм. Кайран тин шухăшласа илтĕм: XXI ĕмĕрте пурăнатпăр-çке, халĕ кавир-самолет мар, ахальлисем те питĕ сайра вĕçеççĕ. Тăван çĕршывăн мăнаçлă тĕп хули Мускав урлă пуйăспа çула тухма тиврĕ. Курск вокзалне чиперех çитрĕм. Хусан вокзалне кайма тухсан метрора Раштав парни кĕтнĕ мана – çул укçи 10 тенкĕ хакланнă. Касса умне çитрĕм те – "Чăваш Ен" пуйăса билет юлман. Ахаль те пăсăк кăмăл пушшех йӳççе кайрĕ.

Хаваслă сасă илтĕннĕрен шартах сикрĕм:

– Раççейри чи культурăллă хулана, Шупашкара, каясшăн-и?

– Ăхă, – аран-аран сăмах хушатăп. – Анчах мĕнле çитмелле-ши унта?

– Ан хурлан. 12 сехетрен вырăнта пулатăн. Турра тав ту. Ман Босăн хунямăшĕ чирленĕрен Кăнара мар, Канара каяс терĕ.

"Тупнă Кăнара Канарпа улăштармалли", – мăртăхса шухăшласа илтĕм ăшăмра. Хам вара пуçăм çине çакнашкал телей йăтăнса аннăшăн питĕ хĕпĕртерĕм. Билет хакне илтсен вара... чутах йăванса каймарăм.

– Вак-тĕвекшĕн ан пăшăрхан-ха, – мана лăплантарнă май сăмса айне нашатырь спирчĕпе йĕпетнĕ мамăк чышать хайхискер. – Юмахри пек вакунра каятăн. Хăвах ăнланатăн – юмах йӳнĕ пулма пултараймасть.

Сăмах вакланă хушăра пуйăс вырăнтан тапраннă. Аран хăваласа çитрĕм. Ух-х!

Вакунра чăнах та юмахри пекех. Çулташпа иккĕн кăна саркаланатпăр. Тĕрлĕ тĕспе кăтартакан телевизор ялкăшса ларать. Виç çĕр ытла канал! Тата космос карапĕ çинчи пек темĕн чухлĕ пускăч. Сăмахран, пĕрне пусатăн та купене самантрах чипер пике кĕрсе тăрать. Сăнĕ-пичĕ, кĕлетки-çурăмĕ... Ых-х! Тумĕ тата! Тĕнчипе чапа тухнă Пайцев мар, Турхан шкулĕнчен вĕренсе тухнă Врелькин çĕленĕскер. Чиперкке сăваплă çăл куç шывĕнчен вĕретнĕ чей, кофе, пылак çимĕç сĕнет. Хăй йăл кулать. Чукун çул пуйăсĕн вакунне мар, кустăрмасем çинчи çăтмаха лекнĕнех туйăнать. Манăн шухăша кӳршĕ те çирĕплетет.

"Тĕнчипе чапа тухнă "Чăваш Ен букечĕ" компанире ĕçлетĕп", – тет хайхискер сĕтел çине сăра кĕленчисене кăларса лартнă май. Сăри Мускав путвалĕсенче вĕретни мар. Чăн-чăнни! Сергей Коморный живописец çак ĕçме пирки каласа кăтартса тахçанах хăлхана çĕртнĕ. Вăл, Кокель пленэрĕсенче темиçе хутчен те пулнăскер, чăваш сăрипе аванах туслашма ĕлкĕрнĕ.

Эпĕ те Украина халăхĕн мăнаçлăхне – салăна – кутамккаран туртса кăлартăм. Ах, анчах! Типĕ вăхăт вĕт. Çулташăм Алик ĕçме-çиме енне пуçне пĕкет, пăшăлтатать: "Какай пулă пултăр, сăра – çветтуй шыв!" Çакăн хыççăн апатланма пикентĕмĕр. Сăмах тупăнсах тăчĕ пирĕн.

– Сирĕн хутора çывăх çын эпĕ, – тет кӳршĕ. – Инçех мар çĕр айĕнче, шахтăра, службăра тăнă. Ракетчик. Тăван çĕр-шыва тивĕçлĕ хӳтĕленĕ. Пирĕн ракетăна американсем "шуйттан" тетчĕç.

– Камшăн шуйттан пуль, камшăн вара чăн-чăн пăхаттир! – калаçăва сыпăнтаратăп.

– Вăт эсĕ Патăрьел районне каятăн. Унта шăпах ĕнтĕ пăхаттирсем пурăнаççĕ. Хăвах курса ĕненĕн-ха.

Кустăрмасен тикĕс шăкăлтатăвне итлесе, шăкăлшăкăл калаçса чăваш çĕрне çитнине сисмен те. Шупашкарта мана Володимир кум кĕтсе илчĕ. Алă парса ытамлашнă хыççăн тӳрех Турханалла вĕçтертĕмĕр. Ильич палăкĕ патĕнчен иртнĕ чухне /унăн авторĕ, сăмах май, манăн ентеш – Харьков çынни Д.Народицкий скульптор/ Ленин ӳпкеленĕнех туйăнчĕ: "Мана асăнса Киевра лартнă палăка аркатма епле хăйнă-ха? Украина ирĕклĕ патшалăх пулса тăнинче манăн тӳпе те пуррине мĕнле ăнланмаççĕ-ха?" Хуравлама сăмахăм тупăнмарĕ...

Акă вăл – Турхан çĕрĕ! Вун-вун паллă сухаçăна, выльăх ĕрчетекене, ăсчаха, вĕрентекене, Кокель художнике, Герман епископа, Петров композитора ӳстернĕскер! Ахальтен юратмаççĕ иккен ăна манăн ентешĕмсем. Кунти ĕçчен çынсене, илемлĕ вырăнсене вĕсем хăйсен ĕçĕсенче вĕçĕмсĕр мухтаççĕ. Паян Турхан çĕрне, унăн харсăр ывăлхĕрне ӳкернĕ картинăсем Европăри, Китайри, Азири, Америкăри музейсемпе уйрăм çынсен коллекцийĕсене пуянлатаççĕ.

Авалхи чăваш ялĕн укăлчинче тĕрĕллĕ кĕпе тăхăннă çынсем çăкăр-тăварпа, алтăр тулли кăпăклă сăрапа кĕтсе илчĕç. Таса сывлăша кăкăр тулли сывласа илтĕм, сăрине сыпкăм турăм... Пуçăм çаврăнса кайрĕ. "Опанас кума утарта кĕтеççĕ", – хăлхана кĕнĕ çак сăмахсем тăн-пуçа тăрăлтарчĕç.

Вăрман витĕр выртакан кукăр-макăр ансăр сукмакпа утатпăр. Турханта каçĕсем те лăпкă, çепĕç иккен. Тӳпере ахах-мерчен пĕрчисем евĕр çăлтăрсем çиçеççĕ. Ĕмĕрхи йывăçсен хушшинче, юр хупланă уçланкă варринче утарçăн çурчĕ юмахри кермен пек туйăнать. Мăрьерен йăсăрланса тухакан тĕтĕме варкăш çил вылянтарать те вăрман тăрăх арçурисем чупса каяççĕ...

Пире Параска пахчинчи шалçа евĕр çинçешке Микола утарçă кĕтсе илчĕ. "Хĕрĕм, хаклă хăнасем çитрĕç. Йышăн", – терĕ вăл. Таçтан чипер пике тухса тăчĕ. Пуçĕнче – тухья. Кăкăрĕ çинче çутă укçасем чăнкăртатаççĕ. Çинçе пилĕкне тĕрĕллĕ хĕрлĕ пиçиххи çыхнă. Тăванăмсем, аякри çĕрсенче сахал мар чиперкке курнă. Анчах вĕсенчен пĕри те Сарпикепе танлашаймаççĕ. "Ох, Опанас, Опанас, – шухăшлатăп, – Афган хирĕсене минăран тасатнă чухне те кунашкал хăрушă марччĕ. Халĕ чăваш амазонкин хура куçĕ умĕнче чĕтресе тăратăн". Тăна кĕрес тесе хама хытă-хытă чĕпĕтрĕм. Çăмăлрах пек... Юрать тата сĕтел хушшине йыхравларĕç.

Сĕтелĕ!.. Тулăх апатçимĕç йывăрăшне чăтаймасăр авăнса тăрать. Какай шӳрпи, шăрттан, тултармăш, уйран, улма-çырла, кăмпа, шашлăк... Çăка, чечек, хура тул пылĕ... Ку тăрăхри пыл – Раççейре чи лайăххи. Тĕнчипе паллă Ложковпа Ищенко утарçăсем Микола пылне тутаннă хыççăн хăйсенне хурласа пĕтернĕ теççĕ. Мĕн пур çимĕç тап-таса чĕр тавартан хатĕрленĕскер.

Ĕçрĕмĕр-çирĕмĕр, кăмăла ирĕке ятăмăр. Урасем хăйсемех тăпăртатма пуçларĕç. Украин, чăваш, вырăс юррисем янăраса кайрĕç. Вăрманти çуртра тăвăр вĕсене. Ирĕке тухса аякка-аякка вĕçрĕç. Чăваш Ен, Раççей, Украина чикки урлă каçса тĕнче тăрăх саланчĕç.

Кирек епле япалан та вĕçĕ пур çав. Пирĕн уяв та нумайлăха мар. Юлашкинчен мана алтăр тыттарчĕç, сăмах калама ыйтрĕç. "Пинпин çухрăма хыçа хăварса килтĕм сирĕн пата. Куншăн пĕрре те ӳкĕнместĕп. Ытти халăхпа туслă пурăнма пĕлекен çынсене курса чунтан савăнтăм. Николаевпа Попович космосра туслăх кăшăлне çыхрĕç. Шевченко, Гоголь, Кокель пире ĕмĕр килĕштерсе пурăнма пилленĕ. Раштав – пурнăç чĕрĕлнине пĕлтерекен уяв – пирĕн чĕресенче юрату çулăмне чĕрттĕр, ăна ĕмĕр ялкăшма хăват патăр, курайманлăх вучахне яланлăх сӳнтертĕр", – терĕм пурне те ыр сунса.

Тĕрĕс каларăм вĕт? Мĕнле шухăшлатăр?

■ **Опанас кум каланине Одарка кума çырса илнĕ**

## Чĕрĕлӳ палли

***95 çул каялла Хусанта чăвашсен "Шурăмпуç" общество-политика, литература, ăслăлăх журналĕн пĕрремĕш номерĕ кун çути курнă. "Шурăмпуç каçхи тĕттĕмлĕхе сирсе кун пуçланнине систернĕ пекех пирĕн журнал та чăваш халăхĕн культури чĕрĕлнине пĕлтерет. Çавăнпа ăна çакăн пек ят патăмăр", – çырнă редакци пĕрремĕш статьяра. Журнала Национальноçсен ĕçĕсен халăх комиссариачĕ çумĕнчи Тĕп чăваш уйрăмĕ кăларса тăнă.***



*• А.Лбов, 1918 çул.*

Пичет кăларăмне йывăрлăхсем çине-çинех ура хунă. Урăхла пулма та пултарайман: çĕр-шывра граждан вăрçи пынă. Хут çитменрен, чăваш шрифчĕ çукран, журналистсемпе наборлакансем сахалран журнал вăхăтра тухманни те час-часах пулнă. Апла пулин те вăл чăваш халăхне ăслăлăхри çитĕнӳсемпе, чăваш тата вырăс литературисен произведенийĕсемпе паллаштарас енĕпе пысăк ĕç тунă. Чăваш шкулĕсенче унпа вĕрентӳ тата педагогика пособийĕ вырăнне те усă курнă. Журнал медицина пĕлĕвне халăхра анлă сарнă, çынсене тĕрлĕ чирпе кĕрешме, сипленме вĕрентнĕ. Вăрçă çулĕсенче йăл илнĕ мурсем пирки статьясем пичетленĕ.

Журнал çавăн пекех чăваш тата вырăс çыравçисен хайлавĕсене кун çути кăтартнă. Унăн страницисенче К.Ивановăн "Нарспи" поэми, М.Федоровăн "Арçури" сăвăлла юмахĕ, И.Крыловăн юптаравĕсем /Г.Кореньков куçарнă/ вырăн тупнă. Ялта культура ĕç-хĕлне йĕркелеме те нумай пулăшнă вăл.

Чылай хушă редакторта А.Лбов, Д.Ефимов, А.Васильев, А.Лукин, Е.Фадеев, Н.Андреев, В.Токсин ĕçленĕ. "Шурăмпуç" икĕ çул ытла тухса тăнă. Пĕтĕмпе 18 номер /иккĕллĕ тата виççĕллĕ номерсене шута илсен пурĕ 11 кĕнеке/ кун çути курнă. Пĕрремĕш чăваш журналĕ хыççăн каярахпа "Сунтал" тата "Ялав" журналсем кун çути курнă.

■ **Александр МОШКИН,**
**ЧР патшалăх хальхи истори архивĕн ĕçченĕ**

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**

